Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N 45 (4614) | *1998 çулхи апрель (ака) уйăхĕн 24-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

## Социаллă тивĕçтерӳ службине 80 çулта

## Яланах пулăшма хатĕр

**Социаллă тивĕçтерӳ служби аллă çул тултарнине те, утмăлша çитмĕл çулсене те паллă туман. Çак паллă кунсем йăлтах манăçа тухнă тенине пĕлтермест ку, ун чухне власть ытти паллă датăсене тĕп вырăна хунă вĕт. Ытларах политикăпа çыхăннисене тейĕпĕр. Общество асĕнче вун-вун çуллăха çирĕпленнисен хăйсен идеологĕсем, биографĕсем, мемуарисчĕсем пулнă, ĕçта та темĕнле службăсен юбилейĕсене паллă тума... Çапах та çак ансат, тĕрĕс служба хӳтлĕхĕнче патшалăх пулăшăвне кĕтекен пин-пин граждан - пенсионерсем, инвалидсем, вăрçăра вилнисен тăлăх арăмĕсем, нумай ачаллă çемьесем, тăлăх ачасем, сахал тупăш илекен çынсем. Хальхи вăхăтра вăл хăй мĕнле пурăнать-ши? Пирĕн корреспондент ыйтăвĕсем çине район администрацийĕн социаллă хӳтлĕх управленийĕн начальникĕ Л.Н.ДИЛЬМУХАМЕТОВА хуравлать.**



***- Лидия Николаевна, Сире юбилей ячĕпе саламлатпăр. Сире тата Сирĕн коллективăра çирĕп сывлăх, çĕкленӳллĕ кăмăл, патшалăх задачисене татса парассинче активлăх сунатпăр. Калаçăва çак паллă датăн историйĕнчен пуçлар.***

- Эпир истори çинчен сахал пĕлетпĕр. Хальхи пурнăç вара унсăр пулма пултараймасть, çапла вĕт? Апла пулин те - эпир хăй вăхăтĕнче службăра тăнă çынсен ячĕсене хисеплесе асăнатпăр. Çапла, тĕрлĕ вăхăтра социаллă тивĕçтерӳ пайне Сингатуллин (1941 çул), Валентина Борисовна Ходасевич, Ксения Ивановна Мокеева (1944 çул), Илья Петрович Кирьяшин, Михаил Константинович Якунин, Екатерина Петровна Котельникова, Султанбеков, Алексей Сергеевич Логинов (1967 çултан тытăнса 1983 çулччен) ертсе пынă. Пĕтĕм плеяда, куратăри? Эпир нумай çул хушши пирĕн системăра хăйсен ĕçне паранса, професси тивĕçне яваплăх туйса пурнăçлакансене хаклатпăр. Вĕсем çаксем: пайăн аслă инспекторĕ Вера Васильевна Бояркина, пирĕн патра 39 çул ĕçленĕскер, малтанхи тĕп бухгалтерсем Татьяна Ивановна Абрамова, Антонина Петровна Медянцева - халĕ вĕсем пурте тивĕçлĕ канура, çапах та пире манмаççĕ, ертӳçĕ-специалистсем Фарида Аскаровна Небайкина, Миннур Фатхутдиновна Хусаинова, специалистсем - Лидия Аркадьевна Логинова, Нина Анатольевна Кузнецова.

***- Çакă сирĕн патăрта сахал çамрăк ĕçленине пĕлтермест пуль?***

- Çук-çук. Пачах урăхла, пирĕн патра чылайăшĕ çамрăксем. Вĕсем çĕнĕлĕхсене активлă йышăнаççĕ, хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Пирĕн патра вăй хуракансем пĕр-пĕрне хисеплесе калаçма, ăнланма, аслă ăру интересĕсене шута илме вĕренеççĕ тесе шутлатăп. Пиртен кашни хăçан та пулин ватăлать вĕт.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Укçа турпас мар, çĕрте выртмасть е

### Бюджета мĕнле пуянлатмалла?

Мĕнле кăна ыйтăва хускатсан та бюджетниксене ĕç укçи парасси е ытти финанс тĕлĕшпе йывăрлăхсене - пурте вырăнти бюджета укçа вăхăтлă та пĕтĕмпех куçарманнинчен килет. Паллах ĕнтĕ, Раççейпе республика хыснине те вĕсен парăмĕсем сахал мар, анчах та пире чи малтан район бюджечĕн тупăш пайĕ ӳсни хумхантарать. Çавăнпа та ĕнтĕ районти финанс пайĕпе налук инспекцийĕ умлă-хыçлă виçĕ шăматкун вырăнти бюджета парăмсем уйрăмах пысăк предприятисемпе организацисен ертӳçисемпе канашлу ирттерчĕç. Кунта конкретлă сăлтавсем те пур. Çапла, çулталăк пуçламăшĕ тĕлне бюджет умĕнчи парăм 26 миллион шутланнă пулсан (тӳлемелли срока пăснăшăн хунă пени тата штрафсене шута илсен 30 миллион тенкĕрен те иртет), апрель уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне вăл чакман. Пĕрремĕш кварталта вырăнти бюджета 20 миллион тенкĕ кĕнĕ, пĕлтĕрхи шайпа танлаштарсан, пĕрпекрех. Анчах та парăмсем, киввисене те,çĕннисене те шута илсен, 36 миллион тенкĕрен иртнĕ. Çак суммăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ "Татнефть" акционер обществин тата унăн районти подразделенийĕсене тивет пулсан, ытти предприятисемпе организацисен те парăм сахал мар: сахăр завочĕн - 2,3 миллион тенке яхăн, МСОн - 1,5 миллион тенкĕ, машинăсем тăвакан заводăн тата Зузеевăри нефть промыслин - 1,3-шер миллион тенкĕ, МТСпа "Сельхозтехникăн" - 1,2 миллионшар тенкĕ ытларах, ДРСУн - 1 миллион тенке яхăн.

Бюджетниксене кашни уйăхра ĕç укçи тӳлеме 3,5 миллион тенкĕ кирлине шута илсен, хуçалăхсен парăмĕ - 3,4 миллион тенкĕ - пысăк пулни курăнать. Юлашкисен финанс шайĕ çирĕп маррипе, хуçалăхсен ертӳçисемпе унччен иртнĕ канашлура вырăнти бюджета парăма продукципе тӳлесе татма май пурри çинчен калаçрĕç. Ертӳçĕсем çак майпа усă курма шантарчĕç пулин те, темиçе хуçалăх çеç хăйĕн сăмахне тытрĕ. Çапла майпа, хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Родина", "Элмет", "Кондурча", Кузнецов ячĕпе хисепленекен тата Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсен парăмĕсем чылай пысăк сумма шутланаççĕ (парăмсăр хуçалăх вара çук). Юлашки икĕ хуçалăх парăма продукципе пайăн-пайăн тӳлеме йышăннă. Хăш-пĕр предприятисемпе организацисем те ку тĕлĕшпе тĕрлĕ вариантсемпе майсем шыраççĕ. Çав вăхăтрах бюджетпа вăхăтлă расчет тăвасси çинчен пачах та манса кайнисем те пур. Районти ертӳçĕсем вара производство ĕçченĕсене тивĕçтерекен бюджет сферинчи çынсене вăхăтлă ĕç укçи парас тесе мĕнле кăна çул-йĕр шырамаççĕ пулĕ. (Пенси укçи çинчен каламастпăр та ĕнтĕ).

Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, юлашки вăхăтчен вырăнти бюджета кĕрекен укçан пысăк пайне нефтяниксем тивĕçтернĕ. Анчах кăçалтан икĕ тĕрлĕ налука вĕсем республика бюджетне куçарĕç, ку ĕнтĕ, паллах, вырăнти бюджетăн кăткăс лару-тăрăвне тата та йывăрлатĕ. Çавăнпа та канашлусене хутшăннă администраци пуçлăхĕн финанс ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ Ф.Н.Губайдуллин, налук инспекцийĕн начальникĕ Г.А.Миннугалиев тата ытти службăсен ертӳçисем налук тӳлекенсем вырăнти бюджета хăйсен парăмĕсене вăхăтлă тӳлесе татмалли çул-йĕр шырамаллине палăртрĕç. Суту-илӳ организацийĕсене кашни кун тупăшăн палăртнă конкретлă пайне вырăнти бюджета куçарма тĕллевлартрĕç. Налук тӳлекенсене пурне те çирĕп тĕрĕслесе тăрĕç, парăмсене тӳлесе татасси лайăх енне улшăнмасан тивĕçлĕ мерăсем йышăнĕç. Витĕмлĕ мерăсем çинчен каласан, налук органĕсен ку тĕлĕшпе полномочисем пысăк: хальхи вăхăтра пысăк парăмлисенчен пĕрин пурлăхне арестлес ыйту çивĕч тăрать. Ыттисене те çак шăпа кĕтме пултарать. Укçа турпас мар, çĕрте выртмасть вĕт, апла пулсан бюджета пуянлатасси пĕрлехи ĕç шутланать.

### "Залида" - Нурлатра

"Татарстан" телеканалпа çамрăксен илĕртӳллĕ "Залида" передачăна чылайăшĕ кăмăлпах пăхаççĕ, ăна халăх юратакан Эльмира Хамматовапа Завид Шакиров ертсе пыраççĕ. Акă, "Залида" тинех пирĕн Нурлата та çитрĕ. Иртнĕ эрнере Нурлатри çамрăксен çуртĕнче пирĕн районти тата хулари яшсемпе хĕрсем хутшăннипе черетлĕ передача валли вăйăсем ӳкернĕ. Кунтах телевизионщиксен бригади Элкел тата Аксу районĕсенчи çамрăксен коллективĕсен вăййисене те ӳкерсе илнĕ.

Çапла, пирĕн халь Нурлатри "Залида" экран çине тухасса кĕтмелли çеç юлать.

## Удобренисем илсе килеççĕ

**"Агрохимсервис" акционер обществи минераллă удобренисен запасне ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăннă тесе ыйтни çине АО директорĕн çумĕ Р.ГИМАТДИНОВ çапла хуравларĕ:**

- Апрель уйăхĕнче пирĕн пата 4,5 пин тонна аммофоска илсе килчĕç, халĕ ăна хуçалăхсене уйăрса паратпăр. Кашни кун "Агрохимсервисăн" сакăр КамАЗĕ 320-380 тонна удобрени илсе каяççĕ. Водительсенчен уйрăмах Харис Магизов тата Сабир Зайдуллин правур та вăр-вар ĕçлеççĕ. Вагонсем пушатакан Зоя Молчанова, Заки Шайдуллин, тиекен Замиль Бильданов та ӳркенмеççĕ, ĕçе чарса тăмаççĕ. Çак вăхăт хушшинче "Алга", "Элмет", "Киклĕ", Хафизов ячĕпе хисепленекен тата ытти хуçалăхсене те 620-270-шер тонна удобрени илсе çитерно. Ку хуçалăхсем хăйсен шефĕсен - УТТ, АТП техникипе те ăнăçлă усă курнине палăртмалла. Ытти хуçалăхсем те удобренисем турттарма хăйсем мĕн пултарнă таран тăрăшсан çеç ĕç чылай хăвăртрах вĕçленĕччĕ. Хресченсен хуçалăхĕсен "Черемшан", "Заветы Ильича" ассоциацийĕсенче, "Строитель" хушма хуçалăхра çак ĕçе питĕ вăраха тăсаççĕ.

Çак кунсенче 1,5 пин тонна аммофоска, çаплах аммиак селитри çитмелле. Вĕсене эпир çураки пуçланиччен хуçалăхсен хирĕсене çитерме, хир пулăхлăхне ӳстерме пулăшма тăрăшăпăр.

## Ăшшăн саламлатпăр!

Тутарстан Республикин Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн "Нурлат-Октябрь автотранспорт предприятийĕ" ОАО водительне Агдес Кашифович МУРАТОВА "Тутарстан Республикин транспорчĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ят панă.

# Социаллă тивĕçтерӳ служби 80 çулта

## Çак пурнăçра мĕнле йывăрлăхсем пулсан та пире социаллă хӳтлĕх яланах хĕрхенме, шăпана çăмăллатма тăрăшать

# Яланах пулăшма хатĕр

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Çыннăн интересĕсене те ăнланма пĕлмелле вĕт тата. Пурнăçра чи пĕлтерĕшли çакă пулĕ. Тата. Çамрăксем пирĕн яланах хăйсен пĕлĕвĕсен шайне ӳстерессĕ. Халь, тĕслĕхрен, пиллĕкĕшĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсемпе техникумсенче вĕренеççĕ, чылайăшĕ ĕçленĕ вăхăтрах социаллă ĕçчен дипломĕсене илчĕç.





***- Мĕнле пахалăхсене эсир чи кирлисем тесе шутлатăр?***

- Паллах, вĕсем нумай. Пĕрремĕшĕ вăл - ыркăмăллăх, сисĕмлĕх, тимлĕ пулни, йывăр лару-тăрура пулăшма кăмăл пурри... Пурне те асăнса пĕтерме çук. Хăш-пĕрисем нумай ĕçлеймеççĕ, пăрахса каяççĕ.

***- Лидия Николаевна, йăнăшмастăп пулсан, эсир собеса 15 çул ертсе пыратăр ĕнтĕ?***

- Çапла, апрелĕн 17-мĕшĕнче шăпах 15 çул пулчĕ.

***- Çак вăхăт хушшинче социаллă тивĕçтерӳ служби, унăн сăн-сăпачĕ мĕнле улшăннă?***

- Задачăсем çавсемех юлнă ĕнтĕ. Çапах ĕç йывăрланчĕ, укçа расчечĕсем ӳсрĕç. Калăпăр, 80-мĕш çулсенче пирĕн пай 7 пин пенсионера тивĕçтеретчĕ пулсан, халь çав шут 16,5 пине яхăн. Ун чухне пенси 5 çул хушшинче пĕрре çĕнĕрен расчет тăваттăмăр, халь вара - кашни кварталта, уйрăм категорисемпе: миçе çултине, инвалид пулнине шута илсе тата ытти те. Тӳлемелли пенси, тĕрлĕ пособисен виçи пин хут ӳсрĕç вĕт. 9 çул каялла килте тивĕçтерекен çĕнĕ служба йĕркеленчĕ, халь унсăр ĕçлеме пачах та май çук. Чулпан ялĕнчи Ватăсен çурчĕ ĕçлет. ВТЭК бази çинче медицинăпа социаллă экспертизăн районсем хушшинчи бюро йĕркеленĕ, социаллă хӳтлĕх пайне тунă, пире компьютерсем пулăшаççĕ... Çакă - кĕскен калани çеç-ха.

***- Тата адреслă социаллă хӳтлĕх программи, чек программи...***

- Тĕрĕс, эпир ку енĕпе те ĕçлетпĕр. Сăмах май каласан, çак программăн Тутарстантинчен лайăхрах аналогсем çук. Унта Венгри тата ытти çĕршывсен опытне кĕртнĕ.

***- Пенсисене "çĕнĕлле" шутласси çинчен питĕ нумай çырнă тата калаçаççĕ. Хальхи Закон пирки эсир мĕн калама пултаратăр?***

-Ăна вĕçне çитереймен тесе шутлатăп. Пенсие 85 çул хыççăн кайнисен ĕç укçи пысăках марччĕ. Паллах, пенси вĕсене нумай шутласа паман. Апла хушса тӳлессе те çынсем ахалех шаннă. Çавăнпа та халь çав закона нумайăшĕ ӳпкелешет. Ун тĕлĕшпе ĕçлемелле тесе шутлатпăр.

***- Кăçал социаллă тивĕçтерӳ пайĕ мĕнле ĕçлерĕ?***

- Пенсисемпе пособисем 59 миллиард та 166 миллион та 894 пин тенкĕ тӳленĕ. 1998 çулхи пĕрремĕш кварталта 15 миллион ытла (çĕнĕ укçапа). Эпир ытлашши тӳлеместпĕр тата тӳлесе те тататпăр. Ку пирĕншĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. 1997 çулта - 79 тата кăçал 40 пенсионер хăйсен сывлăхне республикăри "Казанский", "Ливадия", "Березка", "Жемчужина" санаторисенче лайăхлатрĕç. Çиччĕн "Ока" автомобильсем илчĕç. Эпир ватă çынсен вунăкунлăхне, Пĕтĕм тĕнчери инвалидсен кунне иртерессине активлă хутшăнтăмăр. Эпир çынсене пулăшни питĕ кирли çинчен пĕлетпĕр. Парнесем валеçрĕмĕр, уявсем, концертсем, хĕрхенӳлĕх апачĕсем йĕркелерĕмĕр - пирĕн ветерансем хăйсен хуйхи-суйхине, ĕçне хĕлне манса, чунне уçса пама час-часах пултараймаççĕ вĕт. Çаксем пурте пирĕн тивĕçсене кĕмеççĕ, анчах эпир çынсене пулăшса, вĕсен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме тăрăшатпăр. Эпир хамăрăн ĕçе юрататпăр, çавăнпа та вăл пире савăнăç кӳрет.

***- Эсир коллективăрта мĕн çинчен ĕмĕтленетĕр?***

- Чи ансат та кăткăсси çинчен. Пĕтĕмпех компьютеризацилесси çинчен. Вăл пире виçĕ хут оперативлăрах ĕçлеме пулăшĕ.

**Ю.Тимофеева сăнӳкерчĕкĕсенче: пенси законĕсене лайăх пĕлни, расчетсен тĕрĕслĕхĕ, çынсемпе ырă сунса калаçни - çаксем социаллă тивĕçтерӳ ĕçченĕн чи кирлĕ енĕсем - çапла шутлать пайăн ертӳçĕ-специалисчĕ Фарида Аскаровна Небайкина, вăл кунта 23 çул ĕçлет ĕнтĕ. Йышăну кунĕсенче пĕринче вăл Пӳлер[illegible] ялĕнчи Павел Яковлевич Генералов ветеранпа калаçать.**

**Антонина Петровна Медянцевапа Валентина Николаевна Птичкина - ĕçтешсем. Антонина Петровна социаллă тивĕçтерӳ пайне 34 çул каярах килнĕ, счетовод, инспектор пулса ĕçленĕ, каярах вара бухгалтер службине ертсе пынă. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура, çапах унăн пĕлĕвĕ, опычĕ коллектива малтанхи пекех кирлĕ. Хăйĕн вĕрентекенĕ вырăнне Валентина Николаевна килнĕ, унăн тимлĕхĕ, çирĕплĕхĕпе яваплăхĕ социаллă службăн финанс хуçалăхне йĕркеллĕ тытма пулăшаççĕ.**

# Ют чуна ăшăтмалла

## Манăн хаклăран та хаклă ватăсем

Пурте çамрăк пулаççĕ теççĕ. Ватлăх вара мĕнле? Санăн шанăçу тата ăнланăву ахаль пулмарĕ, пурнăçунта сана юратакан, хисеплекен çынсем пулсан вара питĕ лайăх. Анчах та эсĕ, халсăр пулсан, хăвăн хуйхупа, хушупа пĕччен юлсан, никампа чуна уçса калаçма май пулмасан вара çак ыйтусене татса пама сире социаллă пулăшу служби киле пырсах пулăшĕ.

Ăна районта 1989 çулхи май уйăхĕнче йĕркеленĕ. Çавăн чухне унта пĕччен пурăнакан 160 ватă çынна пулăшас тесе ултă хĕрарăм килнĕ. Халь кунта 57 çын ĕçлет, çав шутра вуннăшĕ ялсенче. Çак хĕрсем çулĕсемпе те, малараххи профессипе те пĕр пек мар, апла пулин те вĕсене ырă кăмăллă пулни, пĕччен пурăнакан ватă çынсене пулăшас кăмăл пурри пĕрлештерет.

... Евдокия Павловна Кузнецована чи малтисен шутĕнче пулăшма тытăннă. Çурма суккăрскер, вăл питĕ начар курнă, 1988 çулта ăна инвалидлăх палăртнă. Улăштарма май çук çулсем хăйсенчен тунă - вăл 1912 çултах çуралнă вĕт, Дуся кинемей пачах вăйсăрланнă хыççăн ун патне, Карл Маркс урамĕнчи 48-мĕш çурта, кинемее пулăшакан çӳреме тытăннă. Вăл урай сĕрнĕ, кĕпе-йĕм çунă, эмелсем илме аптека кайнă, апат-çимĕç туянма черетре тăнă, коммуналлă тӳлевсене перекет кассине вăхăтлă тӳленĕ, врача килне чĕннĕ, май пур таран кинемее ырă та ăшă сăмахсемпе лăплантарма тăрăшнă. Ватăсем - пĕчĕк ачасем пекех вĕт, çавăнпа та кампа та пулин чуна уçса калаçни вĕсемшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пĕлтĕр кĕркунне вара Евдокия Павловна патне МППран платниксемпе малярсем пынă. Урай хăмисене, чӳрече рамисене çĕнĕрен улăштарнă, шпалер çыпăçтарнă, шуратнă, сăрланă. Çакăн пек юсав ĕçĕсене вăл хăй хăçан пурнăçлаччĕ-ха?

Хĕрсен Евдокия Павловна пеккисем хулара 260 çын, вунă ялта тата 80. Кусем вĕсем аяккинчи пулăшусăр пурăнайманнисем. Чылайăшĕ çулсем иртнĕ май чирлеççĕ: хăшĕ сахăр диабечĕпе аптрать е холециститпа гипертони тарăхтарать, хăшпĕр чухне чĕри те ыратать, ун пек чухне вара вĕсем патне ятарлă васкавлă пулăшу врачĕ Надежда Александровна Романова тата Ирина Дмитриевна Киргизова медсестра васкаççĕ. Кирлĕ уколсем тăваççĕ, рецептсем çырса параççĕ, хăшне больница койки çине выртма сĕнеççĕ, специалистсем консультаци иртерессине йĕркелеççĕ, ватăсен пĕтсе çитекен вăй-халĕсене пачах пĕтерес мар тесе чăтăмлăн тăрăшаççĕ. Вĕсем вара çакăншăн тав туса пĕтерейменççĕ: çуртра çӳрекелеме те йывăр, кунта вара медицина пулăшăвĕ пама хăйсемех пыраççĕ.

Хĕрхенӳлĕх служби эрнере виçĕ хутчен ирхине пĕрле пуçтарăнать. Унта вăй хуракансем хăйсен ĕçĕсемпе ыйтăвĕсем çинчен заведующине пĕлтереççĕ. Ватă çынсен хăш-пĕр ыйтăвĕсене хут çине çырса хума ыйтаççĕ: газ илсе килмен, ăшă памаççĕ. Ыйтусене вара пурне те пурнăçламалла, суйласа тăмалла мар. Вутă çурмалла, колонкăран шыв илсе килмелле, кил-çурта тирпейлемелле, кăмакана шуратмалла, чӳречесене тасатмалла, пахча чавса мĕн те пулин акмалла. Кĕскен каласан, ку службăна мĕнпур ĕçе пурнăçлама тӳр килет, çавăнпа та кунта пултаруллисем кăна тытăнса юлаççĕ. Ватă çынсем малтан ют çынна шансах каймаççĕ, кайран вара, хăнăхса çитсен, хăйсен мĕнпур вăрттăнлăхĕсене уçса параççĕ.

Социаллă пулăшу службине ĕçлеме пынисем кунта хăйсене вăхăтлăха ĕçлекенсем пек туймаççĕ, вĕсем кунтан каймаççĕ. Çынсене пулăшу парасси вĕсен хăйсен пурнăçĕн пĕр пайĕ пулса тăнă.

Полоса материалĕсене Т.Назарова хатĕрленĕ.

# СЫВЛĂХ СТРАНИЦИ



# ПОЛИОМИЕЛИТ

**Районта майăн 11-мĕшĕнчен тытăнса 15-мĕшĕччен полиомиелита хирĕç иммунизацилессин наци кунĕсем ирттерĕççĕ.**

Полиомиелит - вируслă инфекци, вăл пуç тата çурăм шăмми миминe сиенлетет, алăсемпе урасене шалкăм çапать, çакна пула çынсем инвалида тухаççĕ. Пиртен кашни ухсахлакан ачасене курнă - ку урана хуçни-не пĕлтермест, çакă полиомиелит чирĕн шалкăмĕ. Çак инфекципе час-часах прививка туман пилĕк çула çитиччен ачасем чирлеççĕ.

Çынна çак чиртен профилактика прививкисем хўтĕлеççĕ, вĕсене хĕрлĕрех сарă тĕслĕ Собин полиомиелит вакцинипе тăваççĕ. Вакцинăна çăвара 4-шар тумлам тумлатаççĕ. Вакцинăна шывпа пĕрле ĕçмелле мар, çаплах прививка хыççăн пĕр сехет ĕçме те, çиме те юрамасть. Вакцинăн сиенлĕхĕ çук.

Раççей Федерацийĕнче полиомиелитпа чирленĕ тĕслĕхсене кашни çул регистрацилеççĕ. Çапла, виçĕ çул хушшинче (1992-1994 çулсем) 20 тĕслĕх пулнă, вĕсенчен иккĕшĕ Тутарстан Республикинче. 1995 çултанпа Тутарстанта полиомиелит пулман, анчах та Раççей Федерацийĕнче эпидемиологи ларутăрăвĕ сасартăк çивĕчленнипе Чечен республикинче полиомиелит сарăлнă, 138 ача чирленĕ, вĕсенчен 6-шĕ вилнĕ. Чирлисенчен чылайăшĕ полиомиелита хирĕç прививка туман 3 çула çитиччен ачасем. Вăрçă пынипе тата вакцина пулманнипе унта прививка нумай вăхăт хушши туман. Вăхăтлă иммунизациленĕ пулсан, чирсене сирсе яма пулнă вĕт-ха. 1996 çултан тытăнса Раççей Федерацийĕнче, пирĕн республикăра иммунизацилемелли наци кунĕсем ирттерме палăртнă.

Пĕлтĕр районта кампани ăнăçлă иртрĕ, пĕрремĕш турта 3 çула çитмен ачасен 99,8 процентне, иккĕмĕш турта 100 процентне явăçтарнă.

Вакцина кирлĕ таран илсе килнĕ ĕнтĕ. Ашшĕ-амăшĕсен çак кунсенче хăйсен ачисене вырăнти сиплев учрежденийĕсене илсе пымалла (хулари ачасене районти тĕп больницăн ачасен консультацийĕнче, сахăр завочĕн сывлăх пунктĕнче тата чугун çул çинчи линейнăй больницăра, ялтисене - фельдшер пункчĕсенче прививка тăвĕç).

Полиомиелита пĕтерме пултаратпăр, çакăншăн эпир пулас ăру умĕнче яваплăх тытатпăр.

**Г.СОРЕНКОВА,**
**ЦГСЭНăн эпидемиологи пайĕн заведующийĕ.**

# Кăрчанкă

Кăрчанкă (чесотка) - ўтĕн ерекен чирĕ. Чир кĕçĕ сăвăсĕ ернинчен пуçланать. Сăвăссем икĕ уйăха яхăн пурăнаççĕ, çак вăхăт хушшинче 30 çăмарта тăваççĕ.

Кăрчанкă килти условисенче усă куракан япаласем урлă ерет. Ача-пăча коллективĕсенче (шкулсенче, интернатсенче, ача сачĕсемпе яслисенче) кĕçĕ сăвăсĕ çыру хатĕрĕсем, теттесем урлă та ерме пултарать.

Мунчасенче, душевойсенче, хăна çурчĕсенче тата ытти обществăлла вырăнсенче те чир ерме пулать.

Аялти кĕпе-йĕме сайра улăштарни, сайрахутра çăвănни, халăх куçса çўрени, командировкăсенче пулни чире сарăлма пулăшаççĕ.



Чир ерсен ўт-тир питĕ кĕçĕтет, уйрăмах каçхине тата çĕрле, ўт-тир хĕрелет, юнланать. Кĕçĕ сăвăсĕсем уйрăмах алă, алăпа уран хуçланакан вырăнĕсенче, кăкăр; хырăм, пилĕк, купарча, арçынсен ар органĕсем çинче ытларах пулаççĕ.

Чиртен сывалма бензилбензоатомпа, кўкĕрт (серная) маçĕпе усă кураççĕ. Пĕтĕм ўт-тире сăтăрмалла, пўлĕм ăшă пулмалла. Сиплев курсĕ иртнĕ хыççăн кĕпе-йĕмпе вырăн таврашĕсене дезинфекци тумалла (вĕретмелле, вĕри шывпа çумалла, утюгпа якатмалла). Чирлĕ çынпа хутшăннисене пурне те профилактика сиплевĕ ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. ЦГСЭНри дезинфекци уйрăмĕнче ĕçлекенсем чирленĕ çын пурăннă вырăнта дезинфекци тăваççĕ. Кăрчанкăпа кĕрешес тĕлĕшпе чи кирлĕ мероприятисем - чирленисене тупса палăртасси, лайăх тĕрĕслесси.

**А.КАЛИНИНА,**
**ЦГСЭН врач-эпидемиологне пулăшакан.**

## Врач сĕнет тата асăрхаттарать

# Глаукома



Глаукома - куç ăшĕнчи шĕвек юхса тухасси кăткăсланнипе, куç пусăмĕ ўснипе, куракан нерв апатланăвĕ пăсăлнипе, унтан пачах ĕçлеме чарăннипе ĕмĕрлĕхе суккăра хăваракан чир. Унăн пилĕк тĕсĕ пур: пирвайхи уçă кĕтеслĕ глаукома, пирвайхи хупă кĕтеслĕ глаукома, пирвайхи хутăш глаукома, иккĕмĕш глаукома, çуралнă чухнехи глаукома.

Пирвайхи уçă кĕтеслĕ глаукома ытларах чухне çын 40 çултан иртсен пуçланать. Унăн сăлтавĕ - куç ăшĕнчи шĕвек юхса тухакан дренаж системи пăсăлни. Дренаж системин тĕрĕсмарлăхĕ йăх тăрăх та куçать. Анчах глаукомапа чирлекенсен пурин ачисем те çак чирпе нушаланаççĕ тени тĕрĕс мар.

Уçă кĕтеслĕ глаукомăпа ытларах чухне йывăр ĕç пуçаракансем, пуçне, куçне темиçе хутчен суранлатнă çынсем чирлеççĕ. Ăна йывăр япаласем йăтнă тата суранланнă чухне пĕчĕк юн тымарĕсем татăлса куçăн дренаж системине хупланипе ăнлантармалла. Дренаж системи йĕркеллĕ çынсен хăй тĕллĕнех тасалать. Тĕрĕс пулмасан майĕпен хупланать тата çыхăнтаракан тканьсем пулса тăраççĕ. Çапла майпа куçри пусăм çĕкленет.

Пирвайхи уçă кĕтеслĕ глаукома икĕ куçа та сиен кўрет. Енчен те сипленмесен 5-7 çул хушшинче пĕр куç хупланать, унтан тепри те курми пулать. Йăлана кĕнĕ тăрăх, малтан шал енчен курăслăх чакать. Хăш-пĕрисем ăна хăйсем те сисеççĕ, анчах врач патне каймаççĕ. Теприсем çапла пулмалла тесе шутлаççĕ.

Сипленмесен пĕтĕмпех суккăрланма та пулать. Пĕтĕмлетсе каласан, куç япăх курма тытăнсанах е пĕр-икĕ кун çеç начартарах курсан пĕр тăхтамасăр врач патне каймалла, куçри пусăма тĕрĕслеттермелле. Глаукомăн ытти паллисем пулманни питĕ шел. Ку чир малтанхи вăхăтра ыраттармасть, курăслăх кăна майĕпен кунне 0,04 процент чакма тытăнать. Чирлĕ çын çакна сисмессе те пултарать. Çавăнпа врач патне те кая юлса каять.

Глаукомăна вăхăтра палăртас тесен 40 çултан иртнĕ çынсен кашнийĕнех çулталăкра пĕр хутчен куç пусăмне тĕрĕслеттермелле. Çакна ирхинехи 8-10 сехетсенче пуçармалла. Мĕншĕн тесен ирхине куç пусăмĕ каçхинехинчен пысăкрах пулать.

Глаукомăпа чирлĕ кашни çыннах врач-окулист учета илет. Вĕсен кашни уйăхсерен е икĕ-виçĕ уйăх урлă врач патне килсе çўремелле.

**В.ИЛЬИНА,**
**врач.**

## Пĕлме интереслĕ

### Мĕн ĕçетпĕр-ха эпир?

Çын организмĕ кашни кунах темиçе литр шĕвек тăкаклать. Çавăнпа та çак ўт-пўри улшăнусене пĕр шайра тытса пырас тесе пирĕн тĕрлĕ шĕвекпе, чейпе, кофепе тата ыттипе те усă курса тăтăшах çак çухатăва саплаштарма лекет. Мĕн ĕçетпĕр-ха эпир? Ахаль шыв, чей, сĕт, кофе, лимонад... Анчах вĕсем пирĕн сывлăхшăн сиенсĕр-ши? Лимонада ытларах ĕçсен усăпа пĕрлех сиенĕ те пулĕ. Кофепе чей калори тĕлĕшĕнчен кăшт пысăкрах. Анчах та кофе питĕ нумай ĕçни сывлăхшăн калама çук сиенлĕ: ывăнтарать, пуç ыратма пуçлать, ыйхă вĕçсе каять, хăш чухне нервсене те пăсма пултарать. Ытлашши чейпе çакнашкалах.

Панулми, апельсин тата ытти çакăн йышши çимĕçсенчен хатĕрленĕ шĕвексем витаминсемпе питĕ пуян. Анчах кунта та чиккине пĕлмелле.

Çын сывлăхĕшĕн сĕт пек усăллă япала çук. Сывлăхпа протеин çăл куçĕ теме те пулать ăна. Сĕтри кальци, фосфор çыхăнăвĕсемпе медицинăра та питĕ анлăн усă кураççĕ. Çапах та тасатнă е вĕретнĕ сĕт анчах ĕçме сĕнетпĕр.



Сывлăхлă пулас тетпĕр пулсан чей, кофе вырăнне таса çимĕçсенчен ятарласа хатĕрленĕ сок ĕçĕр. Тутлăрах та, усăллăрах та пулĕ.

# Хурăн кăмпипе сываласçĕ

**Пĕррехинче эпĕ пĕр ватăрах мучи вăрмантан "чага" ятлă хурăн кăмпи тупса килнине куртăм. Çав кăмпа питĕ усăллă, терĕ вăл. Мĕнрен усăллине каламарĕ. Çак кăмпа çинчен пĕлес килет манăн.**

**В.Моисеева.**

"ЧАГА" - хурăн вулли çинче ўсекен паразит-кăмпа. Вăл хытă кăтрашкаллăскер, урлă кассан кăмпан çиелти сийĕ хура, вăтам сийĕ - тĕксĕм-хăмăр пĕрчĕллĕ, шалти, йывăç вуллипе çыхăнса тăраканни - çутăрах, йăмшакрах курăнать.

"Чагăна" çамрăк хурăнсем çинче курма çук - ўсмест вăл унта. Ватă хурăнсемпе каснă йывăçсем çинче кăна çитĕнет. Пухасса кирек хăçан та пухма юрать. Уйрăмах кĕркунне, хĕлле тата çуркунне - çулçăсемсĕр йывăçсем çинче шыраса тупма çăмăл. Хурăн кăмпи вунă-вунпилĕк çул та ўсме пултарать.

Çак кăмпана хурăн вулли тăрăх пуртăпа касса илеççĕ, шалти йăмшак сийĕнчен тасатса 3-6 сантиметр тăршшĕ каса-каса уçă сывлăшра е кăмакара типĕтеççĕ. Кăмакари ăшă 50-60 градусран ытла пулмалла мар. Типĕтнĕ кăмпана уçă çĕрте упрамалла. Нўрлĕ çĕрте упрасан кăмпа кăвакарать.

Хурăн кăмпипе халăх медицининче анлăн усă кураççĕ. Вар-хырăм чирĕсенчен (язва е гастрит), çын ўт-тирĕ çинче мĕн те пулин шыççан "чага" кăмпин экстракчĕпе сипленеççĕ. Экстрактне çапла хатĕрлеççĕ: кăмпа татăкĕсене çуса, виçтăватă сехетлĕхе шыва ярса лартаççĕ. Кăмпа йăлтах шывра пултăр. Ун хыççăн ăна аш-какай туракан машинкăпа е теркăпа вĕтетеççĕ. Вĕтетнĕ кăмпана малтан лартнă шывах кăштах ăшăтса ямалла. Виçи çакăн пек: вĕтетнĕ кăмпа пĕр стакан пулсан, шывĕ - пилĕк стакан. Вара татах икĕ талăк лартмалла. Ун хыççăн марля витĕр темиçе хут сăрăхтармалла. Кăларса пăрахнă каяш пайĕ чухлĕ вĕретнĕ шыв хушса малтанхи виçене çитермелле. Çак шĕвеке сивĕ çĕрте виçтăватă кун хушши упрама юрать. Вар-хырăм чирĕпе аптракансем ăна апат умĕн кунне виçĕ хутчен пĕрер кашăк ĕçме пултараççĕ.

"Чага" кăмпин экстракчĕпе пыр шыççан та усă курма юрать. Ун пек чухне 40 грамм кăмпа экстрактне 200 миллиметр шывпа хушаççĕ те пăслантарса (ингаляци туса) сываласçĕ.

## Тутлă та, сиплĕ те

**Пĕрисем чей кăмпи сиплĕ, теприсем ун шывне пурин те ĕçме юрамасть теççĕ. Хăшĕсем тĕрĕс-ши? Ăна хăçан ĕçсен лайăхрах?**

**С.Сидоров.**

Чей кăмпине чылайăшĕ кантăк савăтра ўстереççĕ. Унăн кăшт йўçĕрех шĕвекĕ шăрăх çанталăкра чуна уçăлтарать. Унпа хырăмлăхра йўçĕклĕх пĕчĕк чухне, пуç ыратсан, юн пусăмĕ ўссен тата ытти чирсенчен сипленеççĕ. Хăш-пĕр тухтăрсем унăн шĕвекĕпе стрептококклă ангинăпа чирлесен пыра чўхеме сĕнеççĕ. Мĕншĕн тесен чей кăмпи çĕпре кăмпинчен, уксус тата глюконат бактерийĕсенчен тăрать. Медицина литературинче вăл организма мĕнле те пулин сиенлĕ витĕм кўни çинчен калани çук. Чей кăмпин çурхахĕ ўснĕçемĕн сийленсе пырать. Сийсенчен пĕрне уйăрса илсе сарлака кантăк савăта хураççĕ те шĕвĕ чей шывĕ яраççĕ (1 литр чей шывĕ çине - 100-120 грамм сахăр). Шĕвек майĕпен йўçсе уçăлтаракан напиток пек пулать. Тепĕр чухне чей вырăнне шĕвек кофе тата пĕр литр шыва çур чей кашăкĕ пăрça е соя çăнăхĕ ярса пăтратнă шыв хушма юрать.

Савăтри шыва хĕлле 5-6 кунран, çулла 2-3 кунран улăштарса тăмалла. Кăмпине хĕлле 2-3 эрнере пĕрре, çулла 1-2 эрнере пĕрре вĕретнĕ сивĕ шывпа çуса тасатмалла. Чей настойĕнче кунтан ытларах тытсан, кăмпа сиенленет. Çурхахĕ ватăлать, хăмăрланса каять те арканма пуçлать. Тата нумай ларнă шĕвеке ĕçме те хушмаççĕ, мĕншĕн тесен унта этемшĕн сиенлĕ веществосем пухăнаççĕ.

Чей кăмпине сивĕре тата ытла çутă вырăнта тытма юрамасть.

## И.Я.ЯКОВЛЕВ: 150 çул

# Аслă учителе халалласа

Шупашкарти К.Чуковский ячĕллĕ библиотекăра “И.Я.Яковлев. Пурнăç страницисем” фото-выставка йĕркеленĕ. Методикăпа библиографи пайĕ И.Я.Яковлев пурнăçĕ тата ĕçĕ-хĕлĕ çинчен сценари хатĕрленĕ. Чăваш патриархне халалласа тунă ятарлă картотека çĕнелсе, материалсемпе пуянланса пырать. “И.Я.Яковлев пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, педагогика вĕрентĕвĕсем” ятпа йĕркеленĕ кĕнеке выставкипе шкул ачисем тата учительсем час-часах усă кураççĕ. Кĕнеке выставки питĕ пуян. Сăнÿкерчĕксемпе, И.Я.Яковлевпа çыхăннă ытти материалсемпе те паллашма пулать. 5-9-мĕш классенче вĕренекенсем валли Аслă вĕрентекенĕмĕр çинчен ятарлă альбом тунă. Ачасем кашни кун тенĕ пекех вулав залĕнче И.Я.Яковлев калавĕсене “Чăваш халăхне панă халала” тимлĕ вуласа библиотекарьсемпе сÿтсе яваççĕ.

Нумаях пулмасть истори наукисен кандидачĕн Г.А.Александровăн “И.Я.Яковлев: пурнăç сыпăкĕсем” ятлă кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Кĕнеке хулари ачапăча библиотекисенче пур.

Хулари ытти ача-пăча библиотекисенче те И.Я.Яковлева халалласа тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ. Акă, П.Морозов ячĕллĕ библиотекăра Аслă вĕрентекенĕмĕр калавĕсем тăрăх пĕрремĕш классем хушшинче ÿкерчĕксен конкурсне йĕркеленĕ. А.Барто ячĕллĕ библиотекăра “Пĕрремĕш букварь” тата “Иван Яковлев шкулĕ” ятпа интереслĕ пĕлтерÿ сехечĕсем иртнĕ. Б.Житков ячĕллĕ библиотека ĕçченĕсем “Чăваш çĕршывĕн аслă таланчĕ” ятлă викторина сценарийĕ хатĕрленĕ.

48-мĕш шкулта вĕренекен ачасене тата учительсене М.Трубина ячĕллĕ библиотекăра иртнĕ информаци кунĕ интереслентерчĕ. Кунтах аслă библиограф Яна Голанцева Иван Яковлева халалланă çĕнĕ кĕнекесемпе тата унăн калавĕсемпе паллаштарчĕ. К.Чуковский ячĕллĕ библиотека 31-мĕш шкулта И.Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитнине халалласа ирттернĕ наукăпа практика конференцине хастар хутшăнчĕ.

Т.СОЛОВЬЕВА.
("Хыпар" хаçатран).

---

Г.ЕФИМОВ

## И.Я.Яковлева асăнса

Чăваш пулсан та, эпĕ чăваш мар
Тенĕ пекле пурăнаççĕ хăшĕсем.
Вĕсемпеле утмашкăн юнашар
Ытла та хăтлă мар тата кичем.

Тытса-ши Иван Яккăльч халалне
Ун пек чăваш ĕмĕрĕнче пĕрре?
Мĕнпе-ши пулăшса вăл халăхне?
Мĕнпе пырса кĕрет çĕн ĕмĕре?

Ыйту çине ыйту хускалнă май
Маттур куратăп хамăн халăха.
Унпа йăлт хатĕр эпĕ пайлама
Савăнăçа, телейĕме те хуйăха.

Мĕнле калас? - çулсем тикĕсех мар,
Тикĕслемешкĕн хамăр тухмалла.
Нихçан та пар тесе ыйтса ан лар,
Йăлтах йышпа, вăйпа тăрăшмалла.

Чăваш шкулне, чăваш ачисене
Паян умра куратăп куç кĕрет,
Вĕсем çĕкленĕ халăх ăс-халне
Пусса тăрсан та туслăх пек хĕн-терт.

Мухтавлă Иван Яккăльч! Сан умна
Чечек çыххи хуратăп кулленех.
Эс халăхушăн шеллемен чунна,
Эс чĕннĕ халăха пĕлÿ-хĕвел патне!

---

## “Графика” сире кĕтет

Уйрăм предпринимателĕн кĕнекесем, канцеляри таварĕсем, шкулта вĕренме кирлĕ ытти япаласем сутакан магазинне кĕске вăхăт хушшинче нумайăшĕ кăмăллама ĕлкĕрнĕ, вăл малтан кивĕ универмагăн иккĕмĕш хутĕнче вырнаçнăччĕ (“Техника” магазин). Чăнах та, кунта хăть хăçан килсен те мĕн кирлине яланах туянатăн, хакĕсем те Нурлатра чи йÿннисем.

Çак кунсенче вара вăл урăх вырăна куçнă. Халĕ вăл хула варринчи çăкăр магазинĕпе юнашар вырнаçнă. Магазина “Графика” ят панă. Тавар туянакансене пĕлсе тăма: çитес çывăх вăхăтра кунта шкул пĕтерекенсемпе абитуриентсем валли пулăшу литературине илсе килĕç. Магазин илемлĕ литература, кĕнекесем, канцеляри таварĕсем туянма уйрăм çынсенчен, организацисемпе учреждениесенчен заказсем йышăнать. Сăмах май, чылай шкулсемпе ача сачĕсем çак услугăпа усă курнă ĕнтĕ.

---

Улах юррисем

## Çарăмсан, ай, тулăх, ейÿ кайнă

Çарăмсан, ай, тулăх, ейÿ кайнă,
Кĕрĕ-ши, кĕмĕ-ши çырана?
Çамрăк кăна пуçăм, айван чунçăм,
Кĕрĕ-ши, кĕмĕ-ши çын çине?

Кăмакине тума, ай, ÿркенмен,
Шурă тăмпа шуратма ÿркеннĕ.
Атте-анне çуратма ÿркенмен,
Турă телей пама ÿркеннĕ.

Кĕмĕлех те çĕрĕ, кĕмĕл сулă
Ывăнтарчĕç сылтăм аллăма.

Кăçалхи çул илтнĕ çын сăмахĕ
Шуратайрĕ хĕрлĕ сăнăма.

Иккĕех те тур ут пĕр тан юртать,
Чĕн тилхепи тăрăх тар юхать.
Пур шухăшсем пурте аса килсен
Ик куçăмран куççуль тан юхать.

Ир ан вăрат, анне, ир ан вăрат,
Çутăлса çитсессĕн хам тăрăп.
Ан хуйхăр-ха, анне, ан макăр-ха,
Хам нушана эпĕ хам курăп.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.

---

1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-21083 сутăнать, "баклажан" тĕслĕ. Адрес: Тури Нурлат ялĕ, тел. 2-15-35.

1983 çулта туса кăларнă "Москвич-2140" сутăнать, хаклă мар. Телефон: 5-27-88.

“Татсельхозмонтаж” Нурлат-Октябрь холдинг компанийĕ" ПМК ОАО акционерĕсен çулталăк пухăвне ирттересси çинчен пĕлтерет, вăл 1998 çулхи майăн 22-мĕшĕнче 10 сехетре пуçланать, адрес: Нурлат хули, Советская урамĕ, 138. Акционерсене 9 сехетрен пуçласа 10 сехетчен регистрацилеççĕ.

Кун йĕркинче:

1. Обществăн 1997 çулхи çулталăк отчетне çирĕплетесси.

2. Ревизи комиссийĕн пĕтĕмлетĕвне çирĕплетесси.

3. Обществăн директорсен советне суйласси.

4. Обществăн генеральнăй директорне суйласси.

Директорсен совечĕ.

## Пĕлтерÿсем

Альметьевскри нефть техникумĕ 1992 çулта Андрей Геннадьевич Морозов ячĕпе панă диплома тĕрĕс мар тесе шутламалла.

* * *

Пĕр пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-19-23.

* * *

Çемçе сĕтел-пукан сутăнать, хаклă мар. Адрес: Гагарин урамĕ, 5-17.

* * *

Дача участокĕ сутăнать. Телефон: 2-12-52.

## Пĕлтерÿсем

ВАЗ-21083 сутăнать, хаклă мар. Пайăн-пайăн тÿлеме пулать. Телефон: 5-17-22.

* * *

6х6,5 метрлă пура сутăнать. Адрес: Чулпан ялĕ, Миннехановран ыйтса пĕлмелле.

* * *

ВАЗ-2101 машина (кузовĕ çĕнĕ) тата НГДУ ЖКХ патĕнчи гараж сутăнать. Телефон: 5-18-23.

* * *

ВАЗ-2109 сутăнать, хаклă мар. Адрес: Заводской тăкăрлăкĕ, 6-11, телефон: 2-19-32.

* * *

Нурлат райповĕн коопзаготпромĕ халăхран пахчаçимĕç сутăн илет:

- кишĕр, хĕрлĕ кăшман - 1 килограмĕ 1 тенкĕ те 50 пус;
- сухан - 1 килограмĕ 2 тенкĕ.

* * *

Икĕ пÿлĕмлĕ хваттере икĕ пĕр пÿлĕмлисемпе улăштаратпăр. Адрес: Садовая урамĕ, 2а-73. Телефон 2-14-36.

* * *

ВАЗ-2106 салонĕ, 1997 çулта туса кăларнă автоприцеп сутатпăр, 300 килограмм тиев вырнаçать, салонĕ ВАЗ-2103 автомашинăн, усă курнă. Тури Нурлатри Зулкарнеевран ыйтса пĕлмелле.

* * *

Бортлă ГАЗ-3307 (1994 çултанпа ĕçлет, питĕ лайăх шайра) сутатпăр е ВАЗпа, “Нивăпа”, “Газельпе” улăштаратпăр. Тукай урамĕнчи 29-мĕш номерлĕ çуртра ыйтса пĕлме пулать.

* * *

ВАЗ-2106 сутăнать. Адрес: Дружба урамĕ, 75-57, 16 сехет хыççăн пымалла.

* * *

Тасатакан сооруженисем патĕнчи лайăх гараж, ВАЗ-2101 сутатпăр, хаклă мар. Телефон 2-15-35, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

Чугун çулĕн Пĕкĕлме ОРСне яланлăха ĕçлеме водитель кирлĕ.

* * *

Анатолий Степанович Романов ячĕпе панă III-НК сериллĕ, 345489 номерлĕ тракторист-машинист удостоверенине тĕрĕс мар тесе шутламалла.

* * *

Никĕслĕ тата строительство материалĕсемлĕ çĕр участокĕ (афган поселокĕ), пахчаçăсен “Мечта” юлташлăхĕнче дача сутатпăр. Телефон: 5-17-78.

* * *

Хваттер тара илетпĕр. Адрес: Островский урамĕ, 3Б.

* * *

Уйрăм çурта икĕ пÿлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр (сахăр завочĕпе чугун çул поселокĕсене сĕнмелле мар). Адрес: Декабристсен урамĕ, 57.

* * *

2-мĕш номерлĕ шкул Гульнара Киямовна Газизова ячĕпе панă А 695434 номерлĕ аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.

* * *

“Нефтяник” бассейн патĕнчи сад пахчи сутăнать. Телефон: 5-18-70.

* * *

Пахчаçăсен “Алмалык” юлташлăхĕнчи дача сутăнать. Телефон: 5-18-53.

* * *

Туса пĕтермен çуртри пĕр пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-17-14.

* * *

ВАЗ-21011 сутăнать. Адрес: Куйбышев урамĕ, 94а-5, 17 сехет хыççăн пымалла.

* * *

“Школьник” кĕнеке шкапĕ сутăнать. Телефон: 5-13-12.

* * *

1996 çулхи декабрь уйăхĕнче туса кăларнă ВАЗ-21063 сутăнать. Телефонсем: 65-5-06 (ĕçри), 2-24-29 (килти).

“Нурлат-Октябрь сĕт-çу комбиначĕ” АО пенсионерсене пенси шучĕпе сĕт продукчĕсем сутать. Адрес: Нурлат хули, Гиматдинов урамĕ, 142 (кантур çурчĕ). Тавар туянаканăн паспорт тата пенси удостоверенийĕ пулмалла.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 859.